**П. Хусанкай**

## Елисавета Багряна

Пирĕн саманари тĕнчипе мухтавлă хĕрарăм-сăвăçсенчен пĕри Елисавета Багряна 75 çул тултарчĕ. Вăл 1893 çулхи апрелĕн 29-мĕшĕнче Софийăра çуралнă.

Çуркунне! - Пăлхар çĕршывĕн ешерсе, чечекленсе çитекен ытарайми вăхăчĕ. Паллă пăлхар поэчĕ Христо Радевски хăйĕн пĕр сăввинче çапла каланăччĕ: «Çулталăкăн тăватă вăхăтне хăçан та пулин çын ячĕсемпе палăртмалла тусан, çуркуннене эпир Багряна ятне панă пулăттăмăр», - те-нĕччĕ.

Чăнах та, Багрянăн çур ĕмĕр ытла çĕнĕрен çĕнĕ хунав-турат кăларса чечекленекен сăвă йывăçĕ пăлхар поэзийĕнче ватăлми çамрăк çуркунне пек катраммăн сарăлса ларать. Ун кĕнекисене, Европăри пур чĕлхепе çеç мар, арабла та, яппунла та, вьетнамла та вулаççĕ.

Вăл Швецире пулнă чухне унти пĕр хаçат ăна, А. Ахматовăпа М. Цвета-евăпа юнашар асăнса, славянла чĕлхеллĕ хĕрарăм-сăвăçсенчен чи пысăкки çав çеç юлчĕ, тесе хакланă. «Эпир Нобель премине пăлхарсене хăçан панăччĕ çак?» - тесе систерсе хурать çав хаçатах хушăран...

Елисавета Багряна хăйĕн ĕç çулне ача-пăча вĕрентсе пуçланă. Софийăри гимназирен вĕренсе тухсан, вăл Ямбол тавринчи хальхи Недялско ялĕнче шкулта ĕçленĕ. Унтан Софийăри университетăн славянла чĕлхесемпе литературисен факультетĕнчен вĕренсе тухнă. Хăй ĕçленĕ яла астуса, каярах вăл - 50 çултан - «Недялско ялĕнчи хурама» ятлă вăйлă та витĕмлĕ сăвă çырнă. Çав сăвва эпĕ, ытараймасăр вырăсла куçарса, «Советская Чувашия» хаçатра пичетленĕччĕ.

Багрянăпа мана виçĕ хут курнăçма тӳр килчĕ.

...1960 çулхи октябрĕн 14-мĕшĕ. Тепĕр кунне манăн, Пăлхарта 40 кун пурăннă хыççăн, хамăр çĕршыва тухса килмеллеччĕ. Софийăри «Вырăс клубĕ» текен ресторана çыравçăсем мана каçхи кĕрекене чĕнчĕç. Уйрăм пӳлĕмре, сĕтелсене «П» саспалли пек майлаштарса, пĕр çирĕмĕн ларатпăр. Тав курки çаврăнать, сăмах каланать, сăвă шăранать. Асăнмалăх парнесем параççĕ, кăмăллăн кулаççĕ-шӳтлеççĕ... Сасартăк алăк уçăлса каять те - икĕ хĕрарăм килсе кĕреççĕ. Иккĕшĕ те чечек тытнă: пĕрин аллинче шурă гладиолус, теприн - хĕрли. Хĕрлине Дора Габе тытнă-мĕн, шуррине - Елисавета Багряна. Иккĕшĕ те чечексене мана сĕтел урлă сĕнеççĕ...

Багрянăн сăнне унччен кĕнекесенче курнăскер - эпĕ ăна çăмăлах палласа илтĕм. Вăл йăвашшăн, васкамасăр калаçать. Темпераментлă, хĕрӳллĕ сăвăсем çыраканскерĕн, ялти хĕрарăм-вĕрентекенĕн, сăпайлахĕ палăрать. Вăл, хăйĕн шалти вăй-хăватне юри тытса чарса, сăмахĕсене юри йăвашлатса кăларнăн туйăнать.

Тепĕр виçĕ çултан виçĕ чăваш çыравçи харăс Пăлхарта пултăмăр: Илпек, Талвир, эпĕ. Писательсен салонĕнче пулса иртнĕ туслăх пухăвĕнче Багряна та ларчĕ. «Хурăнташсене сума суса, килмесĕр пултарайманах ĕнтĕ вăл», - терĕ мана çамрăк пăлхар поэчĕ - ман тăлмачăм. Елисавета аппамăр, яланхи пекех йăвашшăн, ăшă салам каларĕ, ырлăх-сывлăх сунчĕ пуль. Унăн çаврака хăмăр куçĕсем темле пысăк шухăшпа мĕлкĕшленнĕччĕ, Таçти инçетрине курса тăнă пек аннелĕх çутипе ăслăн йăлкăшса илчĕç. Унччен вăл, чăнах та чылай инçе çĕрсене çитсе курма ĕлкĕрнĕ: Францие, Италие, Бразилие, Аргентинăна...

Тепĕр виçĕ çултан Багрянăпа Грузире тĕл пултăмăр. Руставели çурални 800 çул тултарнă кунсемччĕ. Чаплă уяв. Пуçласа, Тбилисире мар, Боржомире тĕл пултамăр. Унта пилĕк континент поэчĕсен пултарулăх пухăвĕ (симпозиумĕ) пуçтарăннăччĕ. Лекани керменĕнчи канашлу уçăличчен ту хушлăхĕпе уткаласа çӳретĕп. Багрянăна курасчĕ, тетĕп. Çӳçне кĕскерех кастарнă, сăрăрах костюм тăхăннă, кăшт хулăнланнă хĕрарăма аякранах палларăм.

Пĕрне-пĕри сывлăх сунтăмăр. Таврари ешĕл вăрманлă вашăкрах сăрт-тăва пăхса илчĕ те: «Хамăрăн Родон тăвĕсем  пекрех», - терĕ Багряна.

Этем, ăçта çитсен те, хăй çуралнă çĕршывăн паллисене курма хавас çав.

...Ахалцих хулинче Руставелие лартнă çĕнĕ палăка уçма пуçтарăнтăмăр.

Багряна питĕ тинкерсе сăнать: уйрăм çынна та, пĕтĕм халăхне те, çĕнелен çĕршывне те... «Культурăри халăх деятелĕ» - çавăн пек чи хисеплĕ ят панă ăна Халăх Болгарийĕн чи аслă тытăмĕ - Халăх Пухăвĕ.

— Уяв хыççăн Прагăна, унтан тӳрех Парижа вĕçетĕп, - терĕ вăл мана уйрăлнă чухне.

Кун-çулне кура мар канăçсăр чĕри çаплах таçталла йыхăрать-ха ăна. Лăпланми шухăшĕ çаплах çĕнĕрен çĕнĕ çухрăм хушма хистет пурнăç çул-йĕрĕпе. Художникшĕн кашни ырă тĕлпулу, кашни пархатарлă паллашу - мул парса илме хал çук пуянлăх мар-и вара!

Багрянăн пĕр сăввине эпĕ Мускаври хаçатра шăпах Çĕнĕ çул тĕлне куçарса кăларсаттăм. Хаçатне илсен, вăл мана çапла çырчĕ: «Ак çапла саламласчĕ - мĕнпур поэтсен те пĕрне-пĕри Çĕнĕ çул ячĕпе!»

Çуралнă кунĕ ячĕпе те çаплах саламлас килчĕ ман ăна.

— Ĕмĕрӳ вăрăм пултăр, аппамăр!

П. Хусанкай

## ÇУРХИ ТУЙĂМ

Тата тепре хĕл каçрăм эпĕ сыввăн.
Юратнă ту,
ку — сан пархатару!
Апрель тӳпи сенкер,
хĕвелĕ — ылтăн,
ун айĕнче —
сан кĕмĕл пек тăрру.
Сăхса тухайнă чĕп сăмси пек çивĕч
куран тин çурнă хурăн çулçине.
Кăчкисем —
çума салатнă çивĕт
чӳхет ирхи ăш çумăр вĕсене.
Шав ăшăрах хĕвелĕ,
чĕрĕлеççĕ
уйсем-хирсем те пĕтĕм çут тĕнче.
Курап:
çынсем кĕпе хывса ĕçлеççĕ
йĕри-тавра
йăрансăр пуссенче.
Мĕнпур енчен килет çурхи хаваслăх —
туремсенчен,
сăртран хăй йĕркипе...
Çитмен пек туйăнать-ха манăн ватлăх,
каллех пăртак эп çамрăкланнă пек.
Ак тĕлĕнсе кайса пăхса тăратăп:
ĕнер кăна çул çукчĕ-ха кунта,
сип-сивĕ хĕлччĕ,
хĕнччĕ çывхарма та,—
юр хӳнĕччĕ йăлтах ман кил-çурта.
Кил, ăшăт, çуркунне,
йăпат ачашшăн!
Тăван çĕршыв,
ăшра çап-çуттăн çун!
Сана савма,
ятна юрра хумашкăн
хăвачĕ пур-ха санăн сăвăçун.